Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

82 (7936) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса

Çамрăксене – çурт-йĕр



*«Ялсене 2013 çулччен социаллă аталантарасси» федераллă тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн 2011 çулта пирĕн района ял çыннисене çурт-йĕр тума пĕтĕмпе 2 миллион та 456 пин тенкĕлĕх, ялта пурăнакан тата ял хуçалăхĕнче ĕçлекен çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсем валли 2 миллион та 994 пин тенкĕлĕх субсидисем уйăрса панă.*

*Патшалăх пулăшăвне тивĕçнисем хушшинче Муркаш ял тăрăхĕнчи Шаптакра пурăнакан Татьяна Михайловнăпа Евгений Васильевич Даниловсем те. Евгений «Сеспель» предприятире слесарь-компрессорщик, Татьяна вара районти тĕп больницăра медицина сестри пулса тăрăшаççĕ.*

*«Атте-анне ирех – ĕçе, эпир – садика»,– теççĕ вĕсен пепкисем Максимпа Милена.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Р. Лизакова: «Культурăра вăхăтпа вырăн чикки çук»

Пирĕн интервью

***Çын япаласемпе хатĕрсен тĕнчинче кăна пурăнмасть. Унăн ăс-хакăл аталанăвне кăтартаканни вăл культура шайĕ пулса тăрать. Ку вăл пысăк професси искусстви те, художество пуçарулăхĕ те, литература, музейсем, массăллă коммуникаци хатĕрĕсем, пушă вăхăта йĕркелесси...***

***Районти культура пурнăçĕнче те юлашки вăхăтра пысăк улшăнусем пулса иртнине палăртма кăмăллă. 2010 çулта Муркаш районне культура территорийĕ тесе палăртнă. Çавна май Чăваш Республикин культура событийĕсен сеть марафонĕ шайĕнче тĕрлĕ мероприяти сахал мар иртнĕ. Культура сферинчи инноваци проекчĕсен республикăри конкурсне хутшăнса ЧР Президенчĕн 2 грантне тивĕçнĕ. Районти 57 культурăпа кану центрĕ, тĕслĕх 30 библиотека, 3 музей, ачасен искусство шкулĕ тата ыттисем район çыннисен культура ыйтăвĕсене туллин тивĕçтереççĕ. Пур 11 халăх коллективĕ те иртнĕ çулхи февральте «халăх» ятне тепĕр хут çирĕплетрĕ.***

***Ял тăрăхĕсенчи комплекслă строительство ĕçĕсен хушса финансламалли республикăри конкурсне хутшăнса 2009–2010 çулсенче Орининти тата Йӳçкассинчи Культура çурчĕсене тĕпрен юсанă, 2011 çулта Москакассинчи Культура çуртне юсассипе 2 миллион тенкĕлĕх, Анаткассинчи Культура çуртне юсассипе 1,5 миллион тенкĕлĕх строительство ĕçĕсем пурнăçлаççĕ.***

***Пирĕн республикăн культура сферинчи çитĕнĕвĕсем пирки Чăваш Республикин культура, национальноç ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Роза ЛИЗАКОВА каласа пама кăмăл турĕ.***

**– Роза Михайловна, ял культури пирки уйрăм ăнлав теме пулать-и е ку вăл сăпайлах мар?**

– Хальхи обществăна хулара тата ялта пурăнакансем çине пайлани тĕрĕс мар. Кунпа пĕрлех уйрăммăн хула тата ял культури пирки калаçма та юрамасть. Вăхăт хулапа ял хушшинчи чикĕсене пĕтерет. Хальхи вăхăтра тĕнче, Раççей культурипе çывăхланма нимĕнле чикĕ те, чару та çук. Çавăнпа та культурăпа çыхăннă республика программисене территори мар, отрасль принципĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ. Сăмахран, театрсен аталанăвĕ пирки калаçнă май эпир професси театрĕсене кăна мар, ялсенчи хăйне евĕр театр коллективĕсене аталантарассине те шута илетпĕр.

Хальхи вăхăтра отраслĕн пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕсенчен пĕри вăл – ялсенчи культурăпа кану учрежденийĕсене модернизацилесси. Çак ĕçе республика Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 2007 çулта тытăннă. Унăн хăшпĕр итогĕсене пĕтĕмлетер. 2007–2010 çулсем хушшинче 46 клуб учрежденине модернизациленĕ. Çуртсене тĕпрен юсанă, клубсене хальхи техника оборудованийĕпе тивĕçтернĕ. Пултарулăх коллективĕсем валли сцена костюмĕсем 600 ытла çĕленĕ. Модернизациленĕ кашни клуба «сцена çи-пуçĕпе» пуянлатнă. Ку вăл чи малтанах – тĕрлĕрен хушма хатĕрсемлĕ тĕп чаршав. Комплектсен шутĕнче компьютер оборудованийĕ тата видеопроекци оборудованийĕ. Кăçал татах муниципаллă 2 культурăпа кану учрежденийĕ – Комсомольски районĕнчи Урмаелти социаллă культура центрĕ тата Шупашкар районĕнчи Чăрăшкассинчи ялти Çамрăксен çурчĕ кун пек комплектсене тивĕçĕç.

Тăватă çул хушшинче асăннă программăна пурнăçа кĕртме пĕтĕмпе 199 миллион тенкĕ уйăрнă. 2011 çулта культурăпа кану учрежденийĕсен çурчĕсене тĕпрен юсама 20 миллион тенкĕ пăхса хунă. Ку укçатенкĕпе культурăпа кану учрежденийĕсен татах 30 çуртне тĕпрен юсама май килĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)**

## Ырă улшăнусем пулмаллах

Православи ыйтăвĕсемпе

Çитĕнекен ăрăвăн, унăн анчах та мар, пĕтĕмĕшле халăхăн кăмăл-сипечĕ йĕркеллĕ аталантăр, ответлăх туйăмĕ пултăр тесе нумай тăрăшмалла паян. Ыран мĕнле обществăра пурăнасси çакăнтан килет.

Иртнĕ кунсенче çак ыйтăва район администрацийĕ çумĕнчи тĕн пĕрлешĕвĕсемпе хутшăнса ĕçлекен канашăн анлă ларăвĕнче тишкерчĕç. Общество пуласлăхĕ пурне те кăсăклантарать: район администрацийĕн пуçлăхĕпе, ял тăрăхĕн пуçлăхĕсемпе, массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсемпе тата культура ĕçченĕсемпе пĕрлех ларăва пирĕн район территорийĕнче вырнаçнă чиркӳсен настоятелĕсем те активлă хутшăнчĕç.

Пурнăçра тĕн ыйтăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни кашнин калаçăвĕнчех палăрчĕ. Акă Катькас ял тăрăхĕнчи ветеран О.В. Тямина юлашки çулсенче чиркӳсем уçăлнипе питĕ кăмăллă. «Район администрацийĕ çак ĕçе ăнланса, кирлĕ вăхăтра пулăшса пыни те халăхшăнах», – тесе тĕрĕс палăртрĕ вăл. Ветеран «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçине Н.Г. Ванеркина Шатракассинче чиркӳ хута яма пулăшнăшăн, кĕлĕсене ытти чиркӳсене тухса çӳреме транспортпа тивĕçтернĕшĕн тав сăмахĕ каларĕ.

Халăха православи пирки кирлĕ те тĕрĕс информаципе тивĕçтересси вара район хаçачĕн тата сайчĕн ыйтăвĕ пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе малашне ырă улшăнусем пуласса шантарчĕç. Пурин те пĕрле пĕр тĕллевпе ĕçлемеллине культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А. Андреева та çирĕплетсе палăртрĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ларăва пĕтĕмлетсе каланă сăмаха ăса илсе пурăнсан вара пурнăç чăнах та ырă енне улшăнмалла: «Турра ĕненетĕн пулсан – кĕл тумалла, лайăх пурăнас тесен – лайăх ĕçлемелле».

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Блиц-интервью

## Йывăрлăхран тухса пыратпăр

***Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче паян пĕтĕм ĕç вăйне «иккĕмĕш çăкăр» кăларса пухса кĕртес ĕçе явăçтараççĕ. Юр айне пулмĕ-и-ха çĕр улми? Çак ыйту çине хурав шыраса район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе, ял хуçалăх пайĕн ертӳçипе В.А. КАЛИНИНПА тĕл пулса калаçрăм.***

– Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ кашни культурăна хиртен пӳлмесене кĕртсе хурасси – çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан пирĕн пĕрлехи тĕллев. Çакна ăнланса хуçалăхсен ĕçченĕсем те, вĕсене пулăшас ĕçрен пăрăнманнисем те кулленех çĕр улми пуссисене тухаççĕ. Нумай çĕрте йĕпе-сапана пăхмасăрах çĕр улми кăлармалли комбайнсем ĕçлени пĕрлехи тăрăшулăха çăмăллатни патне илсе пырать. Çĕр улмине çухатусăр пуçтарса илесси паян пысăк ыйтуллă пулин те ăна пурнăçа кĕртме пултарасса эпир ĕненетпĕр, – терĕ Владимир Аркадьевич ман ыйтăва ăнланса.

**– Çĕр ĕçченĕсене пулăшас ĕçрен пăрăнманнисем тесе камсене палăртатăр?**

– Район администрацийĕнче вăй хуракансем, районти тĕп больницăра, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцире ĕçлекенсем халĕ кунсерен «Ударник», «Свобода» хуçалăхсене пулăшма çӳреççĕ.

**– Кăларман çĕр улми чылай-и?**

– Оперативлă кăтартусемпе татах 187 гектар. Хальлĕхе тивекен вăтам тухăç гектар пуçне 118 центнер.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Ачасен сывлăхĕ

## Каникулта – лагере

Хаçатăн 78-мĕш номерĕнче шкул ачисен кĕркуннехи каникулта лагере кайма май пурри çинчен пĕлтернĕччĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ ятарлă конкурс ирттерсе Муркаш ачисем ăçта канма каяссине палăртнă. Вăл – «Чувашиякурорт» санатори» акционерсен хупă обществи (çулталăкĕпех ĕçлекен «Жемчужина» ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли лагерь). Ачасене кунне 5 хут апатлантараççĕ. Тĕрлĕ сиплев процедурисем пулаççĕ. Воспитательсем вĕсемпе занятисем ирттереççĕ. Лагерьте бассейн ĕçлет. Кунсăр пуçне кану программине Шупашкар хули тăрăх курса çӳрессине те кĕртнĕ.

Путевка хакĕ 3085 тенкĕ те 37 пус. Ашшĕ-амăшĕсен 308 тенкĕ те 54 пус кăна тӳлемелле пулать. Заявленисене октябрĕн 28-мĕшĕччен вĕрентӳ пайĕнче йышăнаççĕ. Лагере каяс умĕн педиатр патĕнче е çемье врачĕсем патĕнче пулса справка (5 талăк вăйра) илмелле. Санэпидемстанцире ирттерекен тĕрĕслев кăтартăвĕсем икĕ талăк вăйра пулнине шута илме ан манăр. Лагерьте канмалли вăхăт – ноябрĕн 1–7-мĕшĕсем.

Тĕплĕнрех 62-0-92 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Районта

## Паян – информаци кунĕ

Пирĕн районта паян республика çыннисене социаллă пулăшу памалли хушма мерăсем, ял хуçалăх ĕçĕсене йĕркелесси тата ялта пурăнакан граждансене пулăшмалли мерăсем çинчен темăсемпе информаци кунĕ иртет.

Информаци ушкăнĕсем Москакасси, Ильинка, Турай, Шетмĕпуç, Çатракасси ял тăрăхĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тата ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

Саламлатпăр



Юратнă аттене, савнă мăшăра, кăмăллă кукаçа, ытарайми асаттене, хаклă тăвана – Турай ялĕнче пурăнакан **Николай Михайлович ВОДНИКОВА** 65 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе утма вăй-халу çăл куç пек тапса тăтăр. 100-мĕш картлашка çине çитме чун-чĕререн сунатпăр. Мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса, тăванусен ăшши хушăнса пытăр. Эпир сана çав тери хисеплетпĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана нумай-нумай çул усратăр.

**Пысăк салампа: ачисем, мăшăрĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Чи хаклă, юратнă аннене – Мăн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Калерия Владиславовна ТОЛСТОВĂНА** юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче 45 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Яланах хавас кăмăл-туйăмлă, çирĕп сывлăхлă пул, телей, ăнăçу сунатпăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.



**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕсем, кӳршисем, тăванĕсем.**

# Р. Лизакова: «Культурăра вăхăтпа вырăн чикки çук»

**Пирĕн интервью**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

**– Нумаях пулмасть çамрăк библиотекарьсен Пĕтĕм Раççейри форумĕ иртрĕ. Ăна ирттерме мĕншĕн шăпах пирĕн республикăна суйласа илнĕ-ха?**

– Паллă ĕнтĕ, ку вăл ăнсăртран мар. Чăваш Ен библиотека ĕçхĕлне аталантарассипе чăннипех те ытти регионсем хушшинче лидер. Ялти библиотекăсене модернизацилессин программи хăйне май пысăк пĕлтерĕшлĕ пĕртен-пĕр проект пулса тăрать. Тĕрĕссипе Чăваш Енре ытти регионсенчен малтан çĕнĕ ăрури ялти библиотекăсен (500 ытла) пĕтĕмĕшле сетьне туса хунă.

Çавна май библиотекарьсен ăстăнĕнче те уйрăм улшăну пулса иртрĕ. Халĕ вĕсем мĕн пур çĕннине тата прогрессивлине май пур таран творчествăлла, чуна парса, мĕн пур вăй-халпа тата пысăк хавхаланупа йышăнма тăрăшаççĕ. Çакна ăнланмалла та. Ĕçтешсем хальхи библиотекăн мĕнле майсем пулнипе паллашма килнĕ, пирĕн опыта алла илме.

Чăваш Республикинчи ялти библиотека культурăпа социаллă тата информаци улшăнăвĕсен пур тапхăрĕсене те утса тухрĕ: çуртсен сăн-сăпачĕ, интерьерĕ улшăнчĕ, тĕрлĕрен услугăсемпе тивĕçтересси ӳсет. Халĕ кунта традицие кĕнĕ хут ĕçĕпе кăна мар, çĕнĕ информаци технологийĕсемпе те усă кураççĕ, унăн ресурсĕсем шутĕнче материалсен анлăшĕ пысăк: кĕнекесем, периодика изданийĕсем, аудио-, видеокассетăсем, компакт-дисксем тата электронлă кĕнекесем, даннăйсен базисем, Интернет ресурсĕсем.

**– Пултарулăх творчестви те вырăнти самоуправлени органĕсен витĕмĕнче пулмалла вĕт-ха?**

– Хăйне евĕр пултарулăх коллективĕсен шучĕпе Раççейри пур регион та мухтанма пултараймасть. Культурăпа кану учрежденийĕсенче хальхи вăхăтра 6 пин ытла пултарулăх коллективĕ тата пĕрлешĕвĕ шутланать. Вĕсене 83,5 пин çын ытла çӳрет. 200 ытла коллектив «халăх» ятне тивĕçнĕ.

Анчах та халăхра традицисемпе йăла-йĕркесене, аваллăх культурине хисеплессин тата юратассин туйăмне çӳлтен хушнипе сыхласа хăварма май çук. Телее Чăваш Енре кашни районтах пуçаруллă та пултаруллă çынсем, вăл шутра тĕрлĕ шайри ертӳçĕсем хушшинче те çук мар. Вĕсем улшăнусен ансат мар çулĕсенче те ялти культурăна тимлĕхсĕр хăвармарĕç: пултарулăх коллективĕсене май пур таран хӳтĕлеме тăрăшрĕç, халăх таланчĕсене пулăшрĕç. Çакă ăрусен çыхăнăвне сыхласа хăварчĕ. Ку е вăл пултарулăх тĕсĕпе пĕтĕм çемйипе, темиçе ăру представителĕсем туслă пулнин тĕслĕхĕсем республикăра чылай. Етĕрне районĕнчи Аркадий Айдак пек паллă ертӳçĕсемпе йĕркелӳçĕсем культурăна аталантарас ĕçе хывнă тӳпе пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Пăхăр-ха, шăпах çак районсенче паян вăйлă пултарулăх коллективĕсем ĕçлеççĕ, вĕсем тĕрлĕ фестивальсенче, смотрсенче, конкурссенче Чăваш Ен ятне-сумне çӳле çĕклеççĕ.

**– Электронлă ресурссем тата Интернет хăватлăн, хăш чухне тата агрессивлă майпа пурнăçа кĕрсе пынă чухне ачасен искусство шкулĕсем хăйсен позицийĕсене çухатмаççĕ-и?**

– Телее, çук. Ачасен искусство шкулĕсене çӳрекенсен йышĕ ӳссе пыни те (республикăра хальхи вăхăтра кун пек шкулсем 46) çавна çирĕплетет. 2006 çултан тытăнса 2010 çулччен ачасен искусство шкулĕсенче вĕренекенсен хисепĕ 13 процент ӳсрĕ. Раççейĕпе ку кăтарту вăтамран 12 процентпа, Атăлçи федераллă округĕпе 10 процентпа танлашрĕ. Паян республикипе кашни улттăмĕш вĕренекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсăр пуçне искусство шкулне çӳрет – е художество, е музыка, е ытти енĕпе.



Ачасен искусство шкулĕсем пурте – муниципаллă учрежденисем. Вĕсен малашлăхĕ муниципалитетсен пуçлăхĕсенчен килет. Хăш-пĕр муниципаллă районсемпе хула округĕсенче ачасен искусство шкулĕсене вĕрентӳ управленийĕн органĕсен аллине пană. Анчах та искусство шкулĕсене çапла майпа «пăхăнтарни» ĕç-хĕлĕн хăш-пĕр енĕсене пачах çухатма, культурăпа искусство сферинче ачасен хушма вĕрентĕвĕн системине аталантарассинче шут енĕпе те, пахалăх тĕлĕшпе те кăтартусене чакарма пултарать. Мĕншĕн тесен яланхи пултарулăх çурчĕсемпе танлаштарсан искусство шкулĕн тивĕçĕ – пултаруллă ачасене вăхăтра тупса палăртасси тата професси тĕлĕшпе аталантарасси.

Май килнипе усă курса муниципалитетсен пуçлăхĕсене тепĕр хут чĕнсе каласшăн. Ачасен искусство шкулĕсен проблемисем тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пуласчĕ.

**– Пичет ыйтăвĕсем те сирĕн ведомство витĕмĕнче. Хальхи условисенче район хаçачĕсем хăйсене мĕнле туяççĕ-ха?**

– Раççейри ытларах регионсемпе танлаштарсан, Чăваш Енре пур район хаçачĕсене те сыхласа хăварнă. Ку вăл чи малтанах финанспа экономика тĕлĕшпе чи йывăр тапхăрта республика ертӳçисем районти пичете патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерме йышăну тунипе çыхăннă. Паян куратпăр: шăпах ĕнтĕ район хаçачĕсем вулакансемшĕн чи çывăх изданисем пулса тăраççĕ, çынсем вĕсене ытларах шанаççĕ, вулакансемшĕн вĕсем çывăхрах. Вĕсем район пурнăçне оперативлă тата объективлă çутатаççĕ кăна мар, кунпа пĕрлех районсемпе хуласенче пурăнакан чылай çыншăн шанчăклă пулăшакан тата ырă канаш паракан та пулса тăчĕç.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсен хисепĕ ӳссе пыни те ăна аван кăтартса парать. Иртнĕ çулхи иккĕмĕш çур çулта ăна районти 4057 çемьере илсе тăнă пулсан, паян тираж 4357 экземплярпа танлашать.

«Районкăсем» сăнавсенчен хăрамаççĕ, хаçат форматне, унăн сăн-сăпатне, содержанине улăштараççĕ. Сăмах май кашни район хаçачĕнех Интернетра хăйĕн сайчĕ пур. Çакă ăнсăртран мар. 21-мĕш ĕмĕр – пысăк информаци технологийĕсен ĕмĕрĕ. Редакцисен web-ресурсĕсене кĕрекенсен хисепĕ çултан-çул ӳссе пырать. Çĕнĕ Шупашкарти «Грани» хаçатăн, Çĕмĕрлери «Вперед» таблоидăн сайчĕсем ăнăçлă аталанаççĕ.

Пирĕн «Интернет-вещание Чувашской Республики», «Архивы Чувашии», «Культурный провайдер Чувашии» проектсем ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Кун пек ресурссем тăвассипе пирĕн опытпа халĕ ытти регионсенче усă курма тытăнаççĕ. Акă çак кунсенче Пушкăрт Республикинче культура путеводитель порталĕн презентацийĕ иртет.

Информаци анлăшĕнче тунă пысăк утăм вара вăл, паллă ĕнтĕ, – наци телерадиовещанине туса хуни. Наци радио икĕ çул çурă ытла ĕçлет ĕнтĕ, нумай пулмасть вара наци телевиденийĕ ĕçлеме пуçларĕ. Хальлĕхе çĕнĕ телеканал передачисене кабель сечĕпе Шупашкарта тата республикăри хăшпĕр хуласенче пурăнакансем кăна пăхма пултараççĕ. Цифрăллă телевещание ĕçе кĕртсен вара (палăртнă тăрăх 2013 çулта) программăсене Чăваш Енре пур çĕрте те пăхма пултарĕç. Анчах та эпир цифрăллă телевидени килессе кĕтсе алă усса ларма шутламастпăр. Кабель сечĕсĕр пуçне передачăсене Интернета та вырнаçтарăпăр. Çапла вара çитес вăхăтрах çынсен чăвашла та, вырăсла та тахçантанпах кĕтнĕ ача-пăча, вĕрентӳ, спорт, художество программисене, кунпа пĕрлех юратнă спектакльсен телевидени версийĕсене, çĕнĕ постановкăсене, видеофильмсене пăхма май пулĕ.

**– Çынсене культура çитĕнĕвĕсемпе ытларах çывăхлатас тесен тата мĕн тума пулать тесе шутлатăр?**

– Культурăпа искусство учрежденийĕсен ĕçĕ-хĕлĕн палăрăмлă енĕсенчен пĕри вăл фондсене цифрăласси пулса тăчĕ. «Культурное наследие Чувашии» çĕнĕ порталта 1500 страница ытла вырнаçтарнă. Уйăхсерен портала 1000 çынна яхăн кĕрет. Чăваш Ен архивĕсем Атăлçи федераллă округĕнче документсене популяризацилес тĕлĕшпе хальхи компьютер технологийĕсемпе усă курассипе ытти регионсем хушшинче чăннипех те лидер пулса тăраççĕ. Республикăри библиотекăсен даннăйĕсен электронлă бази 2010 çулхипе танлаштарсан 301 пин çырса пыни чухлĕ ӳсрĕ, 2 миллион та 723 пинпе танлашрĕ. Музей хатĕрĕсен электронлă каталога кĕртнĕ пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 111,2 пинпе танлашать (тĕп фондăн 50 процентчĕ чухлĕ). Раççейĕпе ку кăтарту 2009 çулта 32,1 процент, Атăлçи федераллă округĕпе 9,6 процент пулнă. Малашлăхра эпир электронлă мультимедийлă наци коллекцине туса хума палăртатпăр.

Çавна та палăртса хăварнă пулăттăм. Çакна эпир пĕтĕмпех хитре цифрăсемшĕн тумастпăр. Пирĕн тĕп задача – çынсене театрсене çӳреме, литературăпа искусство произведенийĕсемпе чунчĕререн хавхаланма, клубсемпе Культура çурчĕсенче пухăнма, хăйсен пултарулăхне аталантарма ытларах майсем туса парасси. Çын хăйне ăс-хакăл апачĕ кирлĕ пулнине куллен туйса тăтăр тата ăна тивĕçтерме майсем ытларах пулччăр.

**Сăн ӳкерчĕкре: Р.М. Лизакова Яракри Культура çуртне уçнă çĕрте.**

**Официально**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**13 октября 2011 года №23/4**
**О сроке и порядке приема предложений по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий**

В соответствии со статьями 22, 27 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 21 Федерального закона «О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **р е ш и л а:**

1. Установить срок приема предложений по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва не позднее 02 ноября 2011 года.
2. Предложить политическим партиям, выдвинувшим списки кандидатов, допущенные к распределению депутатских мандатов в Государственной Думе Федерального Собрания Российской Федерации пятого созыва, иным общественным объединениям, представительным органам муниципальных образований, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы до установленного срока представить в Моргаушскую территориальную избирательную комиссию предложения по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва.
3. Направить настоящее решение для опубликования в средства массовой информации.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. ТАРАСОВА.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**13 октября 2011 года №23/3**
**О количественном составе участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва**

В соответствии со статьями 22, 27 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 21 Федерального закона «О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **р е ш и л а:**

1. Утвердить количественный состав участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва согласно приложению.
2. Направить настоящее решение для опубликования в средства массовой информации.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. ТАРАСОВА.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Приложение**
**к решению Моргаушской территориальной избирательной комиссии от 13 октября 2011 года № 23/3**
**Количественный состав участковых избирательных комиссий по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва**

| № | Наименование и № УИК | Кол-во членов участковых избирательных комиссий |
|---|---|---|
| 1. | Октябрьский № 525 | 7 |
| 2. | Чапаевский № 526 | 7 |
| 3. | Шептак-Моргаушский № 527 | 7 |
| 4. | Васькинский № 528 | 6 |
| 5. | Большесундырский №529 | 7 |
| 6. | Большетатаркасинский №530 | 5 |
| 7. | Вомбакасинский №531 | 5 |
| 8. | Шупосинский №532 | 5 |
| 9. | Большекарачкинский №533 | 5 |
| 10. | Тренькинский №534 | 6 |
| 11. | Апчарский №535 | 5 |
| 12. | Шешкарский №536 | 5 |
| 13. | Чураккасинский №537 | 5 |
| 14. | Кадикасинский №538 | 5 |
| 15. | Калайкасинский №539 | 6 |
| 16. | Шатракасинский №540 | 5 |
| 17. | Шомиковский №541 | 5 |
| 18. | Москакасинский №542 | 7 |
| 19. | Рыкакасинский №543 | 5 |
| 20. | Хачкинский №544 | 7 |
| 21. | Орининский №545 | 6 |
| 22. | Адабайский №546 | 5 |
| 23. | Басурманский №547 | 5 |
| 24. | Молгачкасинский №548 | 5 |
| 25. | Сятракасинский №549 | 6 |
| 26. | Кашмашский №550 | 6 |
| 27. | Оточевский №551 | 5 |
| 28. | Ятманкинский №552 | 5 |
| 29. | Тораевский №553 | 5 |
| 30. | Большетокшикский №554 | 5 |
| 31. | Сюткюльский №555 | 5 |
| 32. | Анаткасинский №556 | 5 |
| 33. | Тойшевский №557 | 5 |
| 34. | Тойгильдинский №558 | 5 |
| 35. | Хорнойский №559 | 5 |
| 36. | Чуманкасинский №560 | 7 |
| 37. | Изедеркинский №561 | 5 |
| 38. | Шатьмапосинский №562 | 6 |
| 39. | Тиушский №563 | 5 |
| 40. | Юнгинский №564 | 6 |
| 41. | Кубасинский №565 | 5 |
| 42. | Сярмыськасинский №566 | 5 |
| 43. | Юнгапосинский №567 | 5 |
| 44. | Юськасинский №568 | 6 |
| 45. | Вурманкасинский №569 | 5 |
| 46. | Мадикский №570 | 5 |
| 47. | Нижнепанклейский №571 | 5 |
| 48. | Ярабайкасинский №572 | 6 |
| 49. | Сыбайкасинский №573 | 5 |
| 50. | Акрамовский №574 | 5 |
| 51. | Нискасинский №575 | 6 |
| 52. | Чемеевский №576 | 5 |

